Саламлатпăр



Юратнă мăшăра, аннене, кукамая, асаннене – Хорнуй ялĕнче пурăнакан **Галина Филипповна СМИРНОВĂНА** сумлă юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Мăшăрупа, ачусемпе, мăнуксемпе савăнса пурăнма çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, ăнăçу, иксĕлми телей сунатпăр. Тавах сана ырă кăмăлушăн, чун ăшшишĕн, санăн умра яланах сутă та ырă кунсем пулччăр. Сăн питӳнтен ăшă кулă ан çухалтăр. Турри сана вăй-хăват парса тăтăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, икĕ ывăлĕпе икĕ кинĕ, мăнукĕсем: Настя, Марина, Андрей, Даниил.**

Йăла çӳп-çапĕ

# Ю. Кислов: «Проблемăллă ыйтусене кая хăвармасăр татса памалла»



**Чăваш Республикинче йăла çӳп-çапне (ТКО) пухса тирпейлессин çĕнĕ йĕрки çине куçнăранпа шăпах çур çул çитрĕ. Аса илтересшĕн, регион операторĕ – «Экоцентр» МВК – иртнĕ çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнче ĕçлеме тытăнчĕ. Республика йăла çӳп-çапне пухса тирпейлессин çĕнĕ стандарчĕсене чи малтан пурнăçа кĕртнĕ вунă регион хушшинче.**

«Единая Россия» партин регион уйрăмĕн секретарĕ, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн председателĕн çумĕ Юрий Кислов «Экоцентр» МВК ертӳçисемпе тата сотрудникĕсемпе, вĕсен услугипе усă куракансемпе тĕл пулнă май, çур çулхи ĕç-хĕле пĕтĕмлетнĕ, проблемăллă ыйтусене татса памалли çулсене палăртнă.

Чăваш Енре паян йăла çӳп-çапне 13 пин ятарлă вырăнтан тиесе тухаççĕ. Вăл шутран 4 пин ытла вырăнта çӳп-çап пухма контейнерсем вырнаçтарман. Пĕтĕмĕшле вара контейнерсем 18 пин ытла вырнаçтарнă. Вăл шутран 3 пине яхăн контейнер регион операторĕ хăй вырнаçтарнă. Çур çул хушшинче 1,2 млн кубла метр çӳп-çап тиесе тухнă, ăна ятарлă 7 полигонпа санкциленĕ 5 свалкăна ăсатнă. Енчен те октябрь уйăхĕнче республикăри ялсенчен çурринче яхăн çӳп-çап тиесе тухассине йĕркелесе çитермен пулнă пулсан, февраль уйăхĕнче çӳп-çап турттарса тăман ялсем 155 пулнă е 9 процент. Март уйăхĕн кăтартăвĕсем хальлĕхе паллă мар-ха. Графика пăхăнман пирки тăватă муниципалитетра подрядчиксене улăштарнă. Çур çул хушшинче пĕтĕмпе вара потребительсенчен 115 çăхав тата тĕрĕслев органĕсенчен 57 запрос пулнă. Вĕсем тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăннă, кирлĕ информаци тăратнă.

Çӳп-çап тиесе ăсатнăшăн тӳлессин тарифĕсем Атăлçи федераци округĕнче чи пĕчĕккисем, çĕршывĕпе те чи пĕчĕккисенчен пĕрисем. Çапах та, Юрий Кислов палăртнă тăрăх, йăлари çӳп-çапа пухса тирпейлессин ыйтăвĕ республика ертӳлĕхĕн тата «Единая Россия» партин кулленхи тимлĕхĕнче.

Акă, «Единая Россия» депутачĕсем урлă ял çыннисем чылайăн ыйтупа тухнине шута илсе, Чăваш Ен Пуçлăхĕпе Михаил Игнатьевпа январь уйăхĕнче тĕл пулнă чухне регион ертӳçи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса йăла çӳп-çапĕшĕн тӳлессин виçине ял çыннисем валли 20 процент чакарма хушрĕ. Республика Пуçлăхĕ хушнипе нумай хваттерлĕ çуртсенчен тата уйрăм çынсен хуçалăхĕсенчен çӳп-çап мĕн чухлĕ тухнине уйрăмшар палăртаççĕ, нормативсене корректировка тăваççĕ. Норматив чакни вара тӳлев пĕчĕкрех пулассине пĕлтерет.

Партин регион уйрăмĕн секретарĕ палăртнă тăрăх, граждансен çав-çавах ыйту сахал мар-ха – çӳп-çапа вăхăтра тиесе кайманнинчен, чылай ялта контейнерсем çуккинчен тытăнса çӳп-çапшăн тӳленĕ чухне комисси тӳлеме тивни таранах. Сăмах май, Перекет банкĕ урлă безналичнăй майпа тӳленĕ чухне комисси пысăк мар. Регион операторĕн сайтĕнче харпăр хăй кабинечĕпе усă курса тӳленĕ чухне вара комисси пачах пулмасть. Анчах та унта та регистрациленессипе проблема çук мар, кабинета йĕркелеме пурин те май килмест.

«Единая Россия» çынсене итлет тата илтет, – палăртнă регион уйрăмĕн секретарĕ. – Эпир хамăр граждансен интересĕсене тĕпе хурса ĕçлетпĕр. Çавăнпа та проблемăллă пур ывăтăва та тимлĕхре тытăпăр. Вĕсене пурне те кая хăвармасăр татса парас пулать. Çӳп-çапа тиесе ăсатассин услугипе республикăра пурăнакан кашни çын усă курма пултармалла кăна мар, услугăна вăхăтра тата пахалăхлă тивĕçтерсе тăмалла. Пĕлтерĕшлĕ тепĕр самант – тарифсен мониторингне вĕçĕмех ирттересси. Вĕсем сăлтавлăнскерсем тата тĕрĕс пулма тивĕç».

Социаллă пулăшу

# Пулăшу – контракт çырнине кура

**Сахал тупăшлă çемьесене тата сахал тупăшлă пĕччен пурăнакан граждансене социаллă контракт çырнине кура патшалăх социаллă пулăшупа тивĕçтерет. Мĕнле пулăшу-ха вăл; Çакăн пирки тĕпленĕрех районти социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕпе Валентина Аникинăпа калаçрăмăр.**

**– Валентина Алексеевна, ăнлантарса парăр-ха, тархасшăн. Мĕн вăл социаллă контракт?**

– Чи малтанах палăртса хăвармалла, Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ 2014 çулхи июнĕн 19-мĕшĕнче «Об утверждении Порядка оказания государственной социальной помощи малоимущим семьям и малоимущим одиноко проживающим гражданам на основании социального контракта» йышăну тунă. Унпа килĕшӳллĕн республикăри сахал тупăшлă пур çемье тата сахал тупăшлă пĕччен пурăнакан граждансем, вĕсенчен килмен сăлтавсене пула пĕр çын пуçне тивекен тупăшĕ Чăваш Республикинче пурăнма кирлĕ минимумран пĕчĕкрех пулсан, социаллă контракт çырса социаллă пулăшăва тивĕçме пултараççĕ.

Социаллă контракт вара çемье е пĕр гражданинăн йывăр лару-тăрăвне лайăхлатма пулăшакан меслет пулса тăрать. Вăл çынсене хăйсен пур вăйĕпе активлăрах усă курма май парать. Çапла вара социаллă контракт çыракан çыннăн хăйĕн е çемьери лару-тăрăва лайăх енне улăштарас кăмăлĕ чи малтанах хăйĕн пысăк пулмалла.

Социаллă контракт тăвас тĕлĕшпе заявление пĕр çын çырать, анчах та çемьери кашни çын çак контракта тума килĕшнине çырса пани пулмалла. Заявлени çырса паракан тăратнă сведенисене пĕтĕмпех тĕрĕслеççĕ. Çак заявлени тăрăх социаллă хӳтлĕх органĕн специалисчĕсем контракт вăйра тăнă вăхăт валли çемьен е пĕччен çыннăн социаллă хăнăхĕвĕн программине туса хатĕрлеççĕ.

**– Ку, тепĕр майлă каласан, адреслă пулăшу пулмасть-и?**

– Çапла. Социаллă контракт тăрăх адреслă социаллă пулăшу пани пулать. Пулăшу шутне тĕрлĕ ĕç кĕрет, вăл шутра – граждансен пĕлĕвне, ĕç опычĕне хăнăхăвĕсене кура ĕç вырăнне шырасси, граждансене ĕçпе тивĕçтерес сферăри патшалăх услугисене илме пулăшасси (сăмахран, вĕренӳ курсне ярасси). Кунсăр пуçне çынна общественăлла ĕçсене явăçтарма пултараççĕ. Социаллă контракт çырнă çынна, унăн харпăр хăйĕн ĕçне пуçарса ярас кăмăл пур пулсан, документсем хатĕрлеме пулăшаççĕ. Социаллă контракт çырнисем хăйсен хушма хуçалăхне атлантарассипе те ытларах ĕçлеме пултарĕç.

**– Социаллă хăнăху программине мĕнле факторсене кура çыраççĕ?**

– Программăна заявлени çырнă çынпа пĕрле хатĕрлеççĕ, çавăнпа та кашни тĕслĕхре конкретлă çыннăн е çемьен лару-тăрăвне шута илеççĕ. Программăра çемьене е çынна пулăшма пултаракан конкретлă мероприятисене палăртаççĕ, вĕсене пурнăçламалли енсене çирĕплетеççĕ.

**– Социаллă контракта мĕн вăхăтлăх çырма пулать?**

– Социаллă контракта 3 уйăхран пуçласа 1 çулталăклăх çырма пулать. Вăхăчĕ маларах асăннă программа мĕнле пулнинчен килет.

**– Контракта вăхăт çитмесĕрех татма пултараççĕ-и; Пултараççĕ пулсан, мĕнле сăлтавсене пула?**

– Социаллă контракта вăхăт çитмесĕрех татма пултараççĕ. Сăлтавĕсем вара тĕрлĕрен: документра палăртнă условисене пурнăçламанни, уйрăмах вĕсене пурнăçлама чăрмантаракан шута хумалли сăлтав çук пулсан; çемьере пĕр-пĕр çын тĕлĕшпе лару-тăру улшăннăран пĕтĕмĕшле тупăш улшăнни; урăх региона пурнăма куçни е прописка вырăнĕ улшăнни* çемье тытăмĕ улшăнни.

**– Валентина Алексеевна, калăр-ха, тархасшăн, социаллă контракт çырни çыннăн мĕнле условисем пурнăçламаллине пĕлтерет?**

– Контракт вĕçленес тĕле çыннăн программăна килĕшӳллĕн ĕçлеме вырнаçмалла е харпăр хăйĕн ĕçне пуçарса ямалла, унăн социаллă хӳтлĕх пайĕн специалисчĕсене пурнăмалли условисене тĕрĕслеттерме хирĕçлемелле мар. Пулса иртнĕ улшăнусем çинчен (тупăш, çемье тытăмĕ, харпăрлăх прави тĕлĕшĕнчи улшăнусем пулсан) социаллă хӳтлĕх пайне икĕ эрне иртиччен пĕлтермелле. Çавăн пекех социаллă хăнăху программипе палăртнă пур ĕçе те пурнăçламалла.

**– Контракт çырас текенĕн ăçта пымалла?**

– Социаллă контракт çырма Чăваш Ен Ĕç тата социаллă аталану министерствин «Центр предоставления мер социальной поддержки» учрежденин районти социаллă хӳтлĕх пайне пымалла.

**Н. НИКОЛАЕВА.**